27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
21
ЭРНЕКУН
143 (6638) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника МАСЛЕННИКОВА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем, ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçса, ОСТРОВ хулинчен кăнтăртарахра нимĕçсен шалалла инçене каякан вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та икĕ кун хушшинче 40 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 70 километр таран сарнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем халăх пурăнакан 700 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ШАНИНО, ЗЕЛЕНОВО, КРАСНОГОРОДСКОЕ ятлă пысăк ялсем.

ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçассишĕн тата тăшман оборонине татассишĕн çапăçнă чухне ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, РОГИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, СИЯЗОВ генерал-майорăн, СТЕПАНЕНКО генерал-майорăн, НИКИШИН генерал-майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн КУТЕЙНИКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ОСМОЛОВСКИН, РАДЧЕНКО полковникăн, ФАСТРИЦКИЙ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОЛОСОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВĂН, ПШЕНИЦКИЙ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖУРАВЛЕВĂН, ПОЛУШКО полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ПОДМОГИЛЬНЫЙ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КИРЧЕВСКИН, ЗАЙЦЕВ полковникăн, ПОШЕХОНЦЕВ полковникăн, ПОЛОВНЕВ инженер-полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВĂН, ЛОЛОКО полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçассишĕн тата нимĕçсен оборонине татассишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 19-мĕшĕнче, 22 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçнăскерсене тата нимĕçсен оборонине татнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçнă чухнехи тата тăшман оборонине татнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 19-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, КОВЕЛЬ районĕнчен наступлени тума тытăнса, нимĕçсен вăйлăн çирĕплетнĕ оборонине татса кĕнĕ те, виçĕ кун хушши наступленилле çапăçусем туса пырса, 50 километра çити малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăнăн анлăшне 150 километра çити сарнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронтăн çарĕсем халăх пурăнакан 400 пункта ытла йышăннă, вĕсен шутĕнче РАТНО, МАЛОРЫТА, ЛЮБОМЛЬ, ОПАЛИН ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем пур. Çапла вара фронт çарĕсем ЗАПАДНЫЙ БУГ шывĕ патне пырса тухнă.

Противникăн оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ГУСЕВ генерал-лейтенантăн, КОЛПАКЧИ генерал-лейтенантăн, ПОПОВ генерал-лейтенантăн, ГЛАЗУНОВ генерал-лейтенантăн, ФОКАНОВ генерал-лейтенантăн, РЫЖОВ генерал-майорăн, КУЗЬМИН генерал-майорăн, ПОЗНЯК генерал-майорăн, АНАШКИН генерал-майорăн, ВОЛКОВ генерал-майорăн, БАРИНОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КАЗАКОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ПОЖАРСКИЙĔН, артиллери генерал-майорĕн ГОДИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ГОРБУНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МОДЗЕЛЕВСКИЙĔН, артиллери генерал-майорĕн ДМИТРИЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КУРКОВСКИЙĔН, артиллери генерал-майорĕн СНЕГУРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БИТЮЦКИЙĔН, КОБРИН полковникăн, КАГАН полковникăн, ЗАБЕЛЛО полковникăн, ЕФИМОВ полковникăн, ЗНАЧЕНКО полковникăн, ГУТИН полковникăн, УШАКОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ЛЯРСКИЙĔН, КОПЕЛЕВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ОРЕЛĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВАЙНРУБĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЮЩУКĂН, ТИХОНЧУК полковникăн, ЕРЕМЕЕВ полковникăн, ТИМЧЕНКО полковникăн, АГАФОНОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн РУДЕНКĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОЛЫНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн СИДНЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИЙĔН, БОРИСЕНКО полковникăн, СУХОРЯБОВ полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн, МЯСОЕДОВ подполковникăн, КОМАРОВ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ПРОШЛЯКОВĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВИТВИНИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИОФФЕ, техникăллă çарсен генерал-майорĕн ШАПИРО, СВАДКОВСКИЙ полковникăн, КИСЕЛЕВ полковникăн, КЛЕМЕНТЬЕВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ подполковникăн, ДОБЫЧИН полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАКСИМЕНКĂН, ЧЕРКАСОВ полковникăн, МАКАРОВ полковникăн, ЧЕХОВ полковникăн, САХАРОВ подполковникăн, КАЛЕНТЬЕВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 20-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КОВЕЛЬРЕН хĕвеланăçнерехре нимĕçсен оборонине татса кĕнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 20-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, паян, июлĕн 20-мĕшĕнче, нимĕçсен Хĕвеланăç Украинăри оборонин тĕреклетнĕ пахa пункчĕсем пулса тăракан ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисемпе пысăк чугун çул узелĕсене штурмласа туртса илнĕ.

ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ГОРДОВ генерал-полковникăн, ПУХОВ генерал-лейтенантăн, ДОНСКОВ генерал-майорăн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-майорăн, ОНУПРИЕНКО генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ДЗЕБУЛЬСКИН, артиллери генерал-майорĕн КУБЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЯРОВОЙĂН, ЯНОВСКИЙ полковникăн, РЫКЛИС полковникăн, АРСАХОВСКИЙ полковникăн, СКОРОДУМОВ полковникăн, ЦЕСАРЬ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн НОВИКОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн АНИКУШКИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КОРОЛЕВĂН, САДОВСКИЙ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникăн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЗЛАТОЦВЕТОВĂН, КОЛОМЕЙЦЕВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МИРОНЕНКĂН, ОСАДЧИЙ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИН, БАРАШ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКĂН, БОРИСОВ полковникăн, СИМХОВИЧ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмăнах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИ» тата «РАВА-РУССКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 20-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 20-мĕшĕ.

Совет Белоруссии правительстви Минск хулине куçнă

МИНСК, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Белорусси территорийĕн чылай пысăк пайне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тасатнине пула тата Хĕрлĕ Çар хĕвел-анăçнелле ăнăçлă куçса пынине пула, Советлă Социализмлă Белорусси Республикин Верховный Совет Президиумĕ, Белорусси ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Белоруссири Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Гомель хулинчен Совет Белоруссин столицине Минск хулине куçнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 18-мĕшĕнче ОПОЧКА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, Калинин облаçĕнчи район центрне КРАСНОГОРОДСКОЕ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — НОЧЕВО, ПИКОВА, ЗЕЛТИНИ, ЗИЛУПЕ, РОМАШЕНКИ, ПАСИЕНЕ, СКРИПЧИНА, ШТЯУНЕ ятлă пысăк ялсем тата ПОСИН, ЗИЛУПЕ чугун çул станцийĕсем.

ДРИССА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КОРОЛЕВО, ЛУКШЕВА, РОСИЦА, БИГОСОВО, ПУСТЫНЯ, ДВОРЧАНЫ ятлă пысăк ялсем тата БИГОСОВО чугун çул станцийĕ.

АЛИТУС хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем НЕМАН шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдармсене аслăлатассăн çапăçнă, темиçе ял туртса илнĕ.

ВОЛКОВЫСК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — РОГАЧИ, ОДЛА, КОВАЛИ, ГОЛЫНКА, МИНЬЧИКИ, БУРСОВЩИЗНА ятлă пысăк ялсем тата БЕРЕСТОВИЦА ятлă чугун çул станцийĕ.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, Брест облаçĕнчи район центрĕсене — ГАЙНОВКА хулипе чугун çул узелне тата АНТОПОЛЬ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — НАРЕВКА МАЛАЯ, ВОЙНОВКА, КОРОСТЫЧИ, ОМЕЛИНКА, ЖАБИНКА, ЗАВЕРШИ, ЗАПРУДЫ, БЕРЕЗНА, БОРОДЫЧИ, ОСИПОВИЧИ ятлă пысăк ялсем тата ЖАБИНКА узловой чугун çул станцийĕпе АНТОПОЛЬ чугун çул станцийĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени тума тытăнса, артиллерипе авиаци массăллăн пулăшнипе, нимĕçсен ЛЬВОВ енчи темиçе линирен тăракан вăйлă тĕреклетнĕ оборонине татса кĕнĕ те, виçĕ кун хушши çапăçса, 50 километра çити шалалла кĕрсе кайнă, татса кĕнĕ вырăнăн анлăшне 200 километра çити сарнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем Волынь облаçĕнчи район центрĕсене — ПОРИЦК хулине, ГОРОХОВ хулине, ЛОКАЧИ ялне, Львов облаçĕнчи район центрĕсене — РАДЗЕХОВ хулине, БРОДЫ хулине, ЗОЛОЧЕВ хулине, БУСК хулине, КАМЕНКА хулине, КРАСНОЕ хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ХОБУЛТОВ, СКОМОРОХИ, ТАРТАКОВ, СЕЛЕЦ ВЕЛЬСКИЙ, СТОЯНОВ, ХОЛОЮВ, ПОЛОНИЧКА, ВОЛОХИ, СКВАРЗАВА, БОРТКОВ, КНЯЖЕ, ПЕРЕПЕЛЬНИКИ, ЯРОСЛАВИЦЫ, КУДЫМОВЦЫ, ЕЗЕРНА ятлă пысăк ялсем тата ВОЙНИЦА, ХОРОСТОВ, ХОБУЛТОВ, ГОРОХОВ, БРАНЫ, СТОЯНОВ, РАДЗЕХОВ, ПАВЛОВ ХОЛОЮВ; МЕРУВКА, БУДКИ НЕЗНАНОВСКИЕ, КАМЕНКА, БРОДЫ, ЗАБЛОТЦЫ, ЕЗЕРНА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 76 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 42 самолетне персе ÿкернĕ.

ИЮЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем, ВЕЛИКАЯ шывĕ урлă каçса, ОСТРОВ хулинчен кăнтăртарахра нимĕçсен шалалла инçене каякан вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та икĕ кун хушшинче 40 километр таран малалла кайнă, татнă вырăна 70 километр таран сарнă. Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем халăх пурăнакан 700 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЗАБОЛОТЬЕ, ЧЕРТОВИДОВО, ТИМОХОВО, ЕРМОЛИНО, ШАНИНО, ВЕЛЬЕ, ЗЕЛЕНОВО, ПУСТОЕ ВОСКРЕСЕНЬЕ, СКАДИНО, ЛОСИ, ПЕРЛИЦА, РОГОЗКИ ятлă пысăк ялсем.

Июлĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем ОПОЧКА хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЖЕРЕБИНА, ГАНЬКОВА, РОГАТКИНО, ДЕГЛЕВА, ФЕДОРЕНКИ, НИРЗА, ВЕЦСЛОБОДА, ЕГЛЕВО ятлă пысăк ялсем тата НИРЗА, ОЗОЛКАЛНС ятлă чугун çул станцийĕсем.

ДРИССА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ВЕТЕРОВЦИ, ЗЕНЗИ, АСУНЕ, ИНДРА, СКРАДАЛИ, ДАЛДУША, СЛОБОДКА ятлă пысăк ялсем тата ИНДРА чугун çул станцийĕ.

АЛИТУС хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, Неман шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи плацдармсене аслăлатассишĕн çапăçнă.

ВОЛКОВЫСК хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем СВИСЛОЧЬ шывĕ урлă каçнă та тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — ПЕТРАШЕВИЧИ, КРУШИНЯНЫ, ХОМЕНТОВЦЫ, БОБРОВНИКИ, ЖУБРЫ, ДУБЛЯНЫ ятлă пысăк ялсем тата КРЫНКИ ятлă чугун çул станцийĕ. Пирĕн чаçсене нимĕçсен 31-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ ОКСНЕР генерал-лейтенант тыткăна парăннă.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Брест облаçĕнчи район центрне КЛЕЩЕЛИ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БЕРЕЗА, ИМЕНИН, ГОРОДЕЦ, МЕФЕДОВИЧИ, КАМЕНЬ ШЛЯХЕЦКИЙ, КАМЕНЬ КРУЛЕВСКИЙ, КОРТЕЛИСЫ ятлă пысăк ялсем тата ГОРОДЕЦ чугун çул станцийĕ.

ЛЬВОВ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Львов облаçĕнчи район центрĕсене СОКАЛЬ хулипе МОСТЫ ВЕЛИКИЕ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БОРАТЫН, КРЫСТЫНОПОЛЬ, ОСТРУВ, ПРУСИНОВ, КУЛИЧКОВ, ДЕРЕВНЯ, ДЗИБУЛКИ, ЖУЛТАНЬЦЫ, РЕМЕНОВ (ЛЬВОВ хулинчен 14 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре), ДЗЕДЗИЛОВ, КОЗЛОВ, ОЛЬШАНИЦА, ЯБЛОНОВКА, ТОПОРОВ, ЗАБЛОТЦЫ, ПОДГОРЦЫ ятлă пысăк ялсем тата СОКАЛЬ, КРЫСТЫНОПОЛЬ, ПАРХАЧ, СТРЫГАНКА, САПЕЖАНКА, ЧЕСТЫНЕ, РУДАНЬЦЫ, ЗАБЛОТЦЫ чугун çул станцийĕсем. СОКАЛЬ хулинчен çурçĕртерехри тата кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем ЗАПАДНЫЙ БУГ шывĕ урлă каçса кайнă.

Пирĕн çарсем БРОДЫ хулинчен хĕвеланăçнерехри районра тăшманăн 4—5 дивизирен тăракан группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 65 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 34 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ДВИНСК, ЛЬВОВ, СЕДЛЕЦ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

Июлĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Двинск, Львов, Седлец чугун çул узелĕсенчи çар эшелонĕсем çине тата тăшманăн çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула, Двинск чугун çул узелĕнче пушарсем нумай тухнă. Тăхăр поезд таран çĕмĕрнĕ е вут тивертсе янă. Вăйлă взрывсем пулни паллă. Уйрăмах вăйлă пушар тавар станцийĕнче пулнă, çав пушарта вăхăчĕ-вăхăчĕпе взрывсем пулнă.

Львов чугун çул узелĕнче, бомбăсем тÿрех пырса тивнипе, икĕ çар эшелонĕ тата боеприпас склачĕсем çунма кайнă. Пушарсенче виçĕ хутчен вăйлă взрывсем пулнă.

Седлец чугун çул узелĕнче (Варшавăран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем тухнă. Çар шурлăхĕ тиесе лартнă вагонсемпе платформăсем, çавăн пекех тата нимĕçсен çар склачĕсем çуннă.

☆ ☆ ☆

Балтика тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем наступлени пуçласа янă. Совет чаçĕсем, авиаципе артиллери пулăшнипе, Великая шывĕ урлă каçнă та тăшманăн хăватлă оборонине татнă. Çулйĕрсĕр тата вăрмалла-шурлăхлă вырăнти йывăр условисенче çапăçса, пирĕн çарсем халăх пурăнакан 700 пункта ытла туртса илнĕ. Паян нимĕçсем Синяя шывĕ çинче малтанах туса хатĕрленĕ позицисем çинче чарăнса тăма хăтланнă. Совет боецĕсем нимĕçсен çав шыв урлă хывнă каçсисене хÿтĕлесе тăракан чаçĕсене аркатса тăкнă та пынă çĕртенех Синяя шывĕ урлă каçса кайнă. Пĕр каçă районĕнче тăшман пехотин икĕ батальонне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман йывăр сухатусем тÿсет. Пĕр чаçри боецсем нимĕçсен пĕр тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ чухне 20 хир тупи тата хăй тĕллĕн çÿрекен 7 тупă тытса илнĕ. Пирĕн тепĕр стрелковăй часть кун каçа 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă тата 200 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ. Германие каторгăна хăваласа каякан темиçе пин мирлĕ совет гражданне ирĕке кăларнă.

Пирĕн авиаци тип çĕр çинчи çарсене активлă пулăшса тăнă. Кун каçа совет летчикĕсем 15 танк, 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 3 чугун çул эшелонне вут тивертсе янă. Пĕр аэродромра нимĕçсен 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Алитус хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра тăшман пехотипе танкĕсем чылай участоксенче контратакăсем пуçласа янă, пирĕн çарсене Неман шывĕ урлă хăваласа яма хăтланнă. Нимĕçсен шур контратакисене те сирсе янă. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсем нимĕçсен темиçе танкне çунтарса янă, пехотинецсем гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брест хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Тăшман, çĕнĕрен пехотăпа танксем илсе пырса, Гайновка хулине чугун çул узелне, ĕнер совет чаçĕсем йышăннăскерне, каялла туртса илме хăтланнă. Нимĕçсем çав çапăçăва эсэсовецсен «Викинг» ятлă дивизийĕн чаçĕсене кĕртсе янă. Çав ятлă дивизие совет çарĕсем 1944 çулхи февраль уйăхĕнче пĕтерсе тăкнăччĕ. Нимĕçсем эсэсовецсенчен васкаса çĕнĕ дивизи тунă та, ăна каллех «Викинг» тесе ят парса, Совет Союзĕпе Германи фронтне янă. Пирĕн боецсем тăшмана хирĕç пырса çапнă та ăна хăйĕн малтанхи позицийĕсем çине хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 виллине çити вырăнта юлнă. Венгерсен 5-мĕш çăмăл пехотнăй дивизийĕн пĕр ротине пĕтĕмĕшпех тыткăна илнĕ. Гайновка хулинчен кăнтăртарахра совет чаçĕсем, тăшманпа çапăçса малалла куçса пырса, Клещели хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Çапла вара, пирĕн çарсем Белосток хулипе Брест хули хушшинчи чугун çула татнă.

* * *

Львов хули енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă, Сокаль хулине туртса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем Южный Буг шывĕ урлă каçнă та, татăклă атакăласа, нимĕçсене Крыстынополь ятлă пысăк ялтан хĕссе кăларнă. Южный Буг шывĕн сулахай енче совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем плацдарма сене аслăлатассишĕн çапăççĕ, нимĕçсен йышлă укреплениĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ. Кунти çапăçусенче тăшмана йывăр сухатусем кÿнĕ. Нимĕçсен 40 танкне çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 1.400 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупине тытса илнĕ. Советсен танковăй, утлă тата стрелковăй чаçĕсем, çав тери хăвăрт маневр туса, Броды хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕç çарĕсен группировкине пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Паян гитлеровецсем çав «хурантан» хĕвеланăçнелле хĕсĕнсе тухма хăтланнă. Анчах та вĕсем çавăрса илнĕ унка татма хăтланни ăнăçлă пулман. Тăшмана сынсемпе техника енчен питĕ пысăк сухатусем кÿнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕ Балтика тинĕсĕнче, торпедăсем ярса, тăшманăн 4.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

Совет Латвийĕ тăватă çул тултарнă ятпа

Июлĕн 22-мĕшĕнче Совет Латвийĕ тăватă çул тултарать. Çав уяв ячĕпе Шупашкарта вăхăтлăха пурăнакан латышсем пысăк вечер туса ирттереççĕ.

Вечер программинче — Совет Латвийĕ тăватă çул тултарни çинчен доклад тата пысăк концерт пулать. Талантлă юлташ ертсе пыракан художествăллă пултарулăх кружокĕ латыш халăх юррисене юрласа парать. Уйрăм юлташсем латыш поэчĕсен — Ян Райнисăн, Судрабкалнсăн тата ыттисен сăввисене вулаççĕ. Кунсăр пуçне, концертра ташламалли номерсем, аккордеонистсен, скрипачсен тата ыттисен выступленийĕсем те пулаççĕ.

Латышсен драмкружокĕ «Интереслă паллашу» ятлă пĕр актлă пьеса выляса парать.

СОВЕТ ЭСТРАДИНЕ ПĂХСА ТУХНИ

Июлĕн 17-мĕшĕнче Мускавра совет эстрадин артисчĕсен Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа тунă чи лайăх ĕçĕсене пăхса тухма пуçлаççĕ. Смотрта Мускаври, Ленинградри, Закавказье республикисенчи, Вăтам Азири республикăсенчи, РСФСР-ти облаçсемпе крайсенчи эстрада искусствин мастерĕсем хăйсен ĕçĕсене кăтартаççĕ. Выступленисен программисенче фронтовой бригадăсен эстрадникĕсен выступленийĕсем чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Смотра ачасен эстради те хутшăнать. Çамрăк ачасемпе вăтам çула çитнĕ ачасем валли икĕ программа кăтартаççĕ. (ТАСС).

ВЛКСМ Обкомĕнче

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ Шăмăршă районĕнчи «Динамо» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем республикăри мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсен ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешме чĕнсе каланине ырларĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ комсомол райкомĕсемпе колхозсенчи пуçламĕш организацисене динамовецсен чĕнĕвне комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче сÿтсе-явма, вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсен тата хĕрлĕ кĕтессен ĕçĕсене лайăхлатас енĕпе конкретлă мероприятисем ӗыпăнма хушрĕ. Вулав çурчĕсемпе клубсенче политикăллă çутĕçне тата культурăллă-массăллă ĕçе анлăн сарса пырасси, клубсемпе вулав çурчĕсене, кĕрлĕ кĕтессене çулпуçсен портречĕсемпе, плакатсемпе, чечексемпе илемлетесси, вĕсенче кирлĕ хатĕрсене тупса хатĕрлесси çине уйрăмах пимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра пĕтĕм политикăллă тата культурăллă-массăллă ĕçе уйхирте туса пымалла.

Июлĕн 23-мĕшĕнче вулав çурчĕсемпе колхозсенчи клубсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе çамрăксен воскресникне ирттермеле.

Вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсене ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн вучахĕ туса хурар

„Динамо" колхозри комсомолецсемпе çамрăксем республикăри мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Вăрçă кунĕсенче ялти ĕççыннисен культурăпа политика тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсем ниçтахчи пек мар ÿсрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çарăн тата хамăр союзниксен çĕнтерĕвĕсем çинчен, Совет Союзĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ çинчен пĕлсе тăрасшăн. Каннă вăхăтсенче вĕсем спектакль е концерт курасшăн, çĕнĕ хаçатсем е кĕнекесем вуласшăн. Колхозниксен çавăн пек ыйтăвĕсене тивĕçтересси пирĕн ĕç пулса тăрать.

Пирĕн ялта вулав çурчĕ тата колхоз клубĕ пур. Эпир ялти культурăллă-массăллă ĕçе çавсем урлă туса пыратпăр. Вулав çуртĕнче пирĕн хаçат витринисем, «Юлашки хыпарсем» хăми, кăтарту хăми пур, стена хаçатне йĕркеллĕн кăларса тăратпăр. Вулав çурчĕн совечĕ 5 çынтан тăрать. Вăл кашни уйăхрах вулав çурчĕн планне туса ăна пурнăçа кĕртсе пырать. Вулав çурчĕпе клуб çумĕнче ПВХО, ГСО, драма, хор тата физкультура кружокĕсем ĕçлеççĕ. Çураки умĕн агротехника кружокĕнче 20 çын ытла вĕренчĕç. 1944 çулта эпир художествăллă пултарулăхăн вечерĕсене 8 хутчен ирттертĕмĕр. Клубра тата вулав çуртĕнче хаçат-журналсем вуласа парасси, калаçусемпе докладсем ирттересси йĕркеллĕн пулса пыраççĕ. Кăçалхи çул хальхи тапхăрти лару-тăру çинчен ултă хутчен докладсем туса панă. Çаксем пурте пире çуракине хăвăрт ирттерме пулăшрĕç.

Эпир хамăр умма вулав çурчĕпе колхозри клуба куллен пулăшса пырас, вĕсене чăн-чăнах ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн центрĕ тăвас задача лартрăмăр.

Çавна май эпир çакăн пек мероприятисем пурнăçа кĕртме палăртрăмăр:

1. Хамăр вăйпа вулав çурчĕпе клуб çуртне тĕплĕн тасатса йĕркелемелле, вĕсене çулпуçсен портречĕсемпе тата чечексемпе илемлетмелле, лозунгсемпе плакатсем çырса çакмалла. Хамăр килсенчен 10 чечек илсе пырса вĕсене вулав çурчĕпе клуба лартмалла.

2. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе 15 шукан, шторăсем илмелле, 2 комплект шашка, пĕр комплект домино тумалла.

3. Мĕнпур кружоксене йĕркеллĕн ĕçлеттерсе, вĕсен ретне колхозниксене явăçтармалла. Кружоксен вăйĕпе уйăхра икĕ хутчен художествăллă выступленисем ирттермелле.

4. Кашни уйăхрах учительсен вăйĕпе хальхи тапхăрти лару-тăру çинчен, агрономсемпе медицина работникĕсен вăйĕпе наука ыйтăвĕсем тăрăх докладсемпе калаçусем ирттермелле. Çамрăксемпе ватă колхозниксем хушшинче В. Василевскаян «Радуга», В. Горбатовăн «Непокоренные», А. Толстойăн, «Русский характер», М. Шолоховăн «Они сражались за Родину» ятлă кĕнекисене тата ыттисене те вуласа памалла.

5. Справка паракан сĕтелĕн ĕçне лайăхлатмалла, унпа тĕрлĕ законсене ăнлантарса памалла, облигацисем çине выляссем тухнине тĕрĕслемелле тата колхозниксен мĕнпур ыйтăвĕсене ответлемелле.

6. Вулав çуртне хĕле хатĕрленĕ май, воскресниксем ирттерсе 10 кубометр вутă хатĕрлесе тултармалла.

Асăннă обязательствăсене эпир пурнăçа кĕртрĕмĕр ĕнтĕ.

Хаклă юлташсем! Эпир сире пирĕн пуçарăва йышăнса, клубсемпе вулав çурчĕсене кĕске вăхăтрах ялти культурăллă-массăллă ĕçĕн вучахĕсем туса хума чĕнетпĕр.

Комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕ хушнипе:
комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕ М. ЕЛЬЦОВ, вулав çурчĕн заведующийĕ ЕЛЬЦОВА, агроном РАХМАНОВА, комсомолецсем: ЕВДОКИМОВ, ПОРФИРЬЕВА, БОЧУРИНА.

Совет Союзĕн Геройĕ А. А. Иванов Шупашкарта

Пирĕн земляк гварди капитанĕ Анатолий Александрович Иванов, Днепр шывĕ урлă каçнă чух паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне илнĕскер, июлĕн 18-мĕшĕнче Шупашкара килчĕ. Июлĕн 19-мĕшĕнче Иванов юлташ Шупашкарти пир-тĕртекен фабрикăн работникĕсемпе тата инженерпа-техника работникĕсемпе тĕл пулчĕ. Пир тĕртекен фабрикăн тата çĕлĕк фабрикин работникĕсен тата служащийĕсен пухăвĕнче паттăр земляк сăмах туса калаçрĕ. Вăл Хĕрлĕ Çар паттăрĕсен паттăр ĕçĕсем çинчен, хăй нимĕç фашисчĕсене хирĕç мĕнле çапăçни çинчен каласа пачĕ, работниксене тылра вăй шеллемесĕр ĕçлеме, фронта пулăшма чĕнчĕ. Фабрикăн работникĕсем Героя тĕрлĕ ыйтусем парса ыйтса пĕлчĕç. Пухура сăмах тухса калаçакансем производство планĕсене тултарса пыма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме тупчĕç.

Çав кунах Иванов юлташ вĕтам шкулсен 9-мĕш классĕнче тата Техникумсенче вĕренекенсемпе шкул ачисем Атăл леш енчи республикăри лагерьте пулчĕ, унта вĕренекенсемпе калаçрĕ. Лагерьта вĕренекенсем Иванов юлташа ăшшăн кĕтсе илчĕç, ăна хăйсем строевой тума мĕнле вĕренни кăтартрĕç.

Июлĕн 20-мĕшĕнче Анатолий Александрович пичет работникĕсемпе тĕл пулчĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизаци вĕренÿ пахалăхĕшĕн кĕрешет

Партипе правительство кадрсем хатĕрлессишĕн вăрçă вăхăтĕнче те тимлĕн тăрăшаççĕ. Пирĕн çĕршывра аслă шкулсен ĕçне лайăх организацилеме, çамрăксене çирĕп пĕлÿпе воспитани парса ÿстерме пур майсем те пур. Аслă шкулсенче лайăх вĕренекен студентсене государство стипенди парса тăрать, профессорсемпе преподавательсем валли лайăх ĕçлеме, студентсем валли лайăх вĕренме тивĕçлĕ условисем туса панă.

Чăвашсен государство педагогика институчĕ çулсерен кадрсене хатĕрлет. Вăл Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче культура фронтĕнче ĕçлеме 500 ытла çамрăк специалист пачĕ. Кăçал институтран 151 çын вĕренсе тухать. Вĕсенчен нумайĕшĕсем хамăрăн Чăваш республикинчи шкулсенче ĕçлеме пуçлаççĕ.

Анчах та педагогика институчĕ хăй умĕнче тăракан хисеплĕ задачăсене ялахах тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пынă теме çук-ха. Иртнĕ хĕлти экзаменсем вĕренÿ пахалăхĕ çителĕксĕр пулнине кăтартса пачĕç. Институт коллективĕ вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсене пурнăçа кĕртеймен. Çавăнпа та институтри парторганизацин хăйĕн пĕтĕм ĕçне профессорсемпе преподавательсене тата студентсене вĕренÿ пахалăхĕшĕн активлăн кĕрешме мобилизацилес шутпа çĕнетсе йĕркелемелле пулчĕ. Чи малтанах дисциплинăна çирĕплетни, вĕренÿ ĕçĕнче большевикла йĕркелĕх туни, студентсем хăйсем тĕллĕн вĕренессине лайăхлатни кирлĕ пулчĕ.

Хĕллехи экзаменсем иртнĕ хыççăнах пĕррремĕш çурçулти итогсене студентсен пухăвĕсенче сÿтсе-явса, вĕренÿ пахалăхне ÿстермелли татăклă мероприятисем палăртрăмăр. Уйрăмăнах студентсене воспитани парас ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла пулчĕ. Парторганизаци планĕ тăрăх студентсем хушшинче тĕнчери лару-тăру çинчен тата ытти нумай темăсемпе калаçусем ирттертĕмĕр. Факультетсемпе группăсенче политинформацисем ирттерессине йĕркелерĕмĕр. Çак ĕçсене агитколлектив туса пычĕ. Унта пурĕ 28 çын тăрать.

Уйрăмăнах естествознани факультетĕнчи А. Кондаковăпа Д. Дмитриева агитаторсен ĕçне палăртмалла. Вĕсем агитаципе массăллă ĕçе студентсен ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерес майпа йĕркелерĕç. Çавна пула вара факультет малти вырăна тухрĕ. Акă, Кондакова юлташ агитатор пулса ĕçлекен курса илер. Унта çирĕп дисциплина тунă. Студентсем парторганизацийĕпе дирекци ирттерекен пур мероприятисене те активлăн хутшăнаççĕ. Çавăн пекех унта вĕренÿ пахалăхĕ те начар мар, халĕ экзаменсем йĕркеллĕн пулса пыраççĕ.

Истори факультетĕнче те воспитани ĕçне начар мар организациленĕ. Агитаторсем А. Кузьмин, З. Федорова, С. Павлов юлташсем докладсемпе калаçусем ирттерешне лăпланса лармаççĕ. Вĕсем, кулленхи ĕçе тĕплĕн сăнаса пырса, çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăлараççĕ. Кăлтăксене пĕтерме татăклă мерăсем йышăнаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ истори факультечĕ начар мар вырăнта тăрать.

Институтри парторганизаци студентсем хăйсем тĕллĕн вĕренессине лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем турĕ. Ку ĕçе профессорсемпе преподавательсене анлăн явăçтарнă. Вĕсем вара студентсене хăйсем тĕллĕн вĕренме тимлĕн хăнăхтарса, кирлĕ чухне пулăшса пычĕç.

Вĕренÿре малта пыракан студентсем сахал мар. Парторганизаци вĕсен опытне пур студентсене те парас тĕлĕшпе пухусем, вечерсем ирттерсе пычĕ. Вĕсенче вара малта пыракан студентсем хăйсен вĕренÿри опычĕ çинчен каласа панă. Çакăн пек туни вĕренÿре юлакансене хавасланмтарма, вĕренÿ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшать.

Вĕренÿре коммунистсемпе комсомолецсем малта пыраççĕ. Коммунистсем Васильева, Майкова тата ытти юлташсем, лайăх вĕреннипе пĕрлех, обществăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ парти групписем пур факультетсенчи студентсем вĕренÿре те малти вырăнта тăраççĕ. Анчах пирĕн икĕ факультетра парти групписем çук. Вăл факультетсенче парти ретне илесси те сÿрĕк пырать. Ку ĕнтĕ институтри парторганизаци ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Парторганизаци комсомол организацине ертсе пырас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлеме пуçларĕ. Çавна пула комсомол организацин ĕçĕ те лайăхланчĕ. Вĕренÿ çулĕнче комсомол ретне 83 çамрăка илнĕ. Комсомол организацийĕ вĕренÿ ыйтăвĕсемпе ытларах ĕçлеме пуçларĕ. Комсомолецсем фронтовиксемпе таччăн çыхăнса тăраççĕ. Çакă вăл студентсене дисциплинăллă пулма, тăрăшса вĕренме хавхалантарать. Комсомол организацийĕ пуçарнипе студентсен научнăй конференцийĕсене ирттернĕ. Вĕсенче докладсем туса панă. Çапла, сăмахран, вырăссен аслă полководецĕсен Александр Невский, Пожарский, Петр I, Нахимов тата ыттисен ячĕпе ирттернĕ конференцисем ăнăçлă пулчĕç.

Институтри парторганизаци, вĕренÿ пахалăхне лайăхлатас, дисциплинăна çирĕплетес енĕпе чылай ĕçсем тунă пулин те, вĕсемпе лăпланса лармалла мар. Мĕншĕн тесен вĕренÿ ĕçĕнче халĕ те çитменлĕхсем чылай-ха. Парторганизацин паянхи хисеплĕ задачи вăл — студентсем хушшинче государство умĕнчи ответлăха çĕклесси, вĕренÿ пахалăхне малалла лайăхлатса пырса çирĕп пĕлÿллĕ, тăван çĕршыва чĕререн парăнса ĕçлекен специалистсем хатĕрлеме пулăшасси пулать. Вĕренÿ çулне вĕçленĕ тапхăрта та, 1944—45-мĕш вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ вăхăтра та çав задачăсене тĕп вырăна хурса ĕçлесен, эпир çĕнĕ çитĕнÿсем тума пултаратпăр.

П. ПАВЛОВ,
Чăвашсен государство педагогика институтĕнчи партбюро секретарĕ.

ÇУЛĔР УЙĂХЛĂХĔ

Çулсене юсас пулать

СĔНТĔРВĂРРИ, июлĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Малта пыракан «1-ое Мая», «Восток», «Заря» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем уйăхлăх пуçланнăранпа çулсемпе кĕперсене нумай юсарĕç. Халĕ вĕсем хĕрсех çул çине чул турттараççĕ. Çак кунсенчех хăйсен участокĕсенчи çулсене юсаса пĕтереççĕ.

Çавăн пекех «Шортан» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те хăйсен участокĕсенчи çулсемпе кĕперсене юсаса пĕтерчĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем çулйĕр ĕçне тытăнман та. Сăмахран, Пуçнаркасси ялсоветĕнчи «1-ое Мая» (председателĕ Петров), «Сĕнтĕрпуç» (председателĕ Миронов) колхозсен çулĕсем çÿреме юрăхсăр, çапах та вĕсем уйăхлăх пуçланнăранпа нимĕн те туман. Кун пек колхозсем татах та пур. Хĕрÿ ĕçсем пуçланиччен кашни колхозăнах çулĕсене юсаса пĕтермелле.

Ф. ИЛЬИН.

Выльăхсем валли çителĕклĕ силос хатĕрлер

Силос выльăхсен пахă апачĕсенчен пĕри шутланать. Хĕлле тесен силоса курăкран тунă апат тесе калама пулать. Ахальтен мар ăна, силоса, «хĕлехи çăран» теççĕ. Силос выльăхсен продуктивноçне ÿстерме пите пулăшать. Выльăхсене ситерсен тымар-çимĕçсемпе тапламасăр, силосра белок, минераллă япаласем витаминсем пур. Силоса çитерни выльăхсене çитерме пулăшать [illegible] тымарçимĕçсенчен чухне силос уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Çакă вара тĕтĕмрасем çителĕксĕр чухне силос хатĕрлеме ытларах çитерме пулăшать. Унсăр пуçне выльăхсене тăрантармалли рацион шутне силос кĕртсен, выльăхсем ытти шултăра апатсене те (улăма тата ытти те) юратарах çиеççĕ.

Силос тымар-çимĕçсенчен тутăрах тытать, пахарах шутланать. Ăна çак тĕслĕхсем лайăх çирĕплетсе параççĕ: 100 килограмм тымар-çимĕçре, сĕлĕпе танлаштарсан, 12—14 единица, 100 килограмм силосра вара 17—20 единица шутланать. Тутăлăх тĕлĕшпе, 20 килограмм лайăх силос 4 килограмм тĕштырăпа танлаштать.

Çавна шута илсе, Мускав облаçĕнчи колхозсем кашни сăвакан ĕне пуçне 6—8-шар тонна силос хывнă. Пирĕн республикăра та силоса ытларах хывма пур условисем те çителĕклĕ. Силос тума кирек мĕнле курăк та юрать, анчах та сиенлĕ тата наркăмăшлă курăксене: кисен, тилпĕрен тата ытти çавăн пеккисене яма юрамасть. Акса тăвакан курăксенчен — хĕвелçаврăнăшĕнчен, вир калчинчен, сĕлĕпе вике хушса акнă калчасенчен силос тума питĕ лайăх. Викăпа сĕлĕ калчисенчен тунă силос сыснасене çитерме питĕ пахă. Çавăн пекех [illegible] вăрман курăкĕсенчен те лайăх силос пулать. Силос тума курăксене вĕсем чечеке ларнă вăхăтра çулса хывмалла. Ытларахăшĕ чылай курăксем чечеке ларнă вăхăтра [illegible] кирлĕ япаласене пухса хураççĕ. Хăш-пĕр курăксем вăхăтра çулса хывмасан, вĕсем хытаççĕ, пахалăхĕ чакать. Сăмахран, утхăри тата ытти çавăн пек сиксе çулçăллă сĕткенлĕ курăксенчен уйрăмах паха силос пулать. Хăшпĕр колхозсем ферма çумĕнчи участоксем çине силослăх вир акнă. Вир калчиниче сахăр нумай, çавăнпа та унтан лайăх силос пулать. Вир калчисенчен силос тунă чухне, ун çине виç шайран пĕр шайне хăй тĕллĕн ÿсекен курăксем е клевер яраç пулать. Силослăх вире пуç кăларса пĕрчи сĕтленнĕ вăхăтра çулмалла. Хĕвелçаврăнăшне вара чечеке ларнă вăхăтра çулса силос тумалла. Çавăн пекех хăй тĕллĕн ÿсекен курăксене те чечеке ларнă вăхăтра çулса силос хывмалла.

Пирĕн республикăри çырмасемпе лачакаллă вырăнсенче хăяхпа хăмăш нумай ÿсет. Вĕсенчен силос тусан, выльăхсем çав силоса питĕ юратса çиеççĕ.

Пахча-çимĕç çулçисемпе тунисенчен те лайăх пахалăхлă силос тума пулать.

Уйрăмăнах кушăста, чĕкĕнтĕр, кăшман çулçисемпе анлăн усă курмалла. Часах вĕсене пухса тиретме май пулман пирки, вĕсем юр айне юлаççĕ те ахалех сая каяççĕ. Анчах та вĕсемпе кĕркунне çеç усă курма пулать. Халĕ силос тăвас ĕçре хăй тĕллĕн ÿсекен курăксемпе, çум курăксемпе, хăяхсемпе, хăмăшсемпе ытларах усă курмалла. Силос хывмалли плана тырă вырма тухиччен тултармалла. Купăста, чĕкĕнтĕр, кăшман çулçисене вара плантан иртсерсе силоса хывмалла.

Силос пахалăхĕ тата ăна лайăх сыхласа усрасси курăкран кăна килмест. Силос хывас ĕçре шăтăкне кирлĕ пек алтни, шăтăк стенисене ишĕлмелле мар туни тата уйрăмăнах силоса пĕлсе хывни пысăк вырăн йышăнать. Силос шăтăкне алтнă хыççăн тăм сĕрсе якатмалла, унта сывлăш та, шыв та кĕмелле мар тăвас пулать. Силос шăтăкне тăмлă вырăнта алтнă пулсан, тăм сĕрсе якатмасан та юрать. Сĕр ишĕлекен вырăнсене шăтăк алтсан, шăтăкăн стенисене çатанпа сăрмалла. Шăтăк стенипе çатан хушшине сăрса çемçетнĕ нÿрĕ тăм тултармалла. Çатана авса пынă май тăмне те тултарса пымалла. Ун хыççăн вара çатана çиелтен хăйăрпа ватланă улăм хутăштарса сăрнă тăмпа сĕрсе якатас пулать. Иртнĕ çул алтнă шăтăксене чăн малтан кирлĕ мар çÿпçапсенчен, тăпрапа тислĕксенчен, силос юлашкийĕсенчен тĕплĕн тасатмалла, стена çинчи сурăксемпе лакăмсене кĕреçепе алтса тикĕслемелле. Силос хывас умĕн шăтăка шывпа нÿрлентерме те юрать, вара вăл курăк сĕткенне сахалтарах сăхать.

Силос хывнă чухне ĕçе пĕлсе организацилемелле. Силослăх туранă курăксем тисе нумай ан выртчăр, вĕсене васкасах шăтăка тултармалла тата хытарсах пымалла. Шăтăка хывичченех силослăх туранă курăксем шăтăк умĕнче вăрах выртсан, типеççĕ те хăйсен пахалăхне çухатаççĕ. Силос хывма тытăнсан шăтăка тултарассине вăраха тăсмалла мар, шăтăк туличчен татти-сыпписĕр ĕçлемелле. Вакланă курăка сийĕн-сийĕн хурса хытарса пымалла. Силос ваклакан машинăпа е ытти майсемпе туранă курăка шăтăка тултарсан, ăна çийĕнчех витмелле. Витессине çапла тумалла: силослăх вакланă улăм хумалла, ун çине 20—25 сантиметр хуламĕш çемçетнĕ нÿрĕ тăм хурас пулать. Çиелтен витнĕ тăма лайăх якатмалла тата хытармалла.

Силос шăтăкне çумăр шывĕ ан кайтăр тесен, çине ытларах тăпра купаламалла тата ун тавра канав алтса çавăрмалла, хÿшĕ пек çивиттĕ тусан та аван пулать. Силос шăтăкĕн ани малтанхи кунсенче пусăрăнса лупашкаланать, ăна çавăнпа тикĕслесех тăрас пулать, çĕнĕрен 20—25 сантиметр тăпра хурса купаламалла.

Уйрăм колхозсенче силос ан шăнтăр тесе ун çине ытла та хулăм витеççĕ. Силос çине çур метр хуламĕш витсен çитет, хĕлле ан шăнтăр тесе 1,5—2 метр улăмпа витмелле. Силос шăтăкĕ çине хÿшĕ туса, уçăн ăшне улăм тултарсан ăна хĕлле уçма çăмăл пулать, çавăнпа та силос шăтăкне витнĕ чухне çакна та асра тытмалла.

Силос хывас ĕçе пур колхозсенче те лайăх организацилемелле, ку ĕçе фермăра ĕçлекенсем пуçарса пымалла. Колхоз выльăхĕсем валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Доцент П. БЕРЕЖНАЯ,
ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Нимĕçсем Хĕвелтухăç Пруссирен тараççĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăç Пруссире халăх пурăнма юраман зона тунă. Çав зонăн сарлакăшĕ 30 километртан пуçласа 40 километра çитет. Вăл Тильзит хулинчен хĕвелтухăçнерехре пуçланать те Гумбиннен хулипе Растенбург хули урлă Алленштейн хули патне çитиччен каять. Çав зонăри халăха унтан урăх çĕре тухса кайма хушнă.

Хĕвелтухăç Пруссири халăх банксемпе перекет кассисене пырса тулнă. Хăшпĕр банксемпе перекет кассисем хупăннă. Лодкăсене Балтика тинĕсĕнче çÿреме чарнă. Моторлă лодкăсен, мотоциклсен, автомашинăсен двигателĕсем çинчен чи кирлĕ пайĕсене илнĕ. Халăх пурăнма юраман занăра пур çулйĕр паллисене те илнĕ.

Хĕвелтухăç Пруссири вокзалсене кунтан урăх çĕре куçса кайма шутланă нимĕçсем пĕтĕ йышлăн пырса тулнă. Вĕсем Германин шалти районĕсене тухса тарасшăн. Чугун çулсемпе шоссе çулĕсем таракан нимĕçсемпе тулса ларнă, çав таракан нимĕçсен хисепĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 18-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Çапăçусенче пĕрре пĕр енĕн, тепре тепĕр енĕн ĕçĕсем ăнăçлă пынă хыççăн Лессэрен Нуайене çитиччен пыракан фронтра союзниксен çарĕсем паха командăй пунктсене туртса илнĕ, Ремийи-сюр-Лозонран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Самсонри тата Лабеи ялĕсене ирĕке кăларнă. Вир шывĕн хĕвеланăç енче союзниксен çарĕсем Мениль-Дюранран пĕр миля кăнтăралла куçнă. Сен-Ло хули патне пымалли вырăнсенче Мартенвиль ялне ирĕке кăларнă. Нуайерен тата Эвресирен çурçĕрелле хаяр çапăçусем пынă. О-де-Форж местечкăна ирĕке кăларнă.

Союзниксен авиацийĕ июлĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçпа тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 18-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем тăшманăн Орн шывĕнчен хĕвелтухăçнерехри позицийĕсене татнă. Паян ирхине ирех пирĕн çарсем, авиаци вăйлăн пулăшнипе, наступлени пуçласа янă. Пирĕн çарсем, Орн шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе малалла куçса пырса, Кан хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри уçă вырăна тухнă, халĕ унта тăшманăн пысăк вăйĕсемпе çапăçаççĕ. Пирĕн çарсем Орн шывĕ тăрăхĕнчи пĕтĕм района, çав шутра Орн шывĕн кăнтăр хĕрринче Кан хулине хирĕç ларакан Восель хулине те, тăшмантан тасатаççĕ. Йывăр çапăçусем пыраççĕ.

Паянхи ирхи наступление ăнăçлă пуçласа яма Кан хули патĕнчи вăйлă çирĕплетнĕ сектора малтанах союзниксен авиацийĕн пысăк вăйĕсене пухса тăратнă. Йывăр, вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем, пĕтĕмпе 2.200 самолет ытла, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ушкăн хыççăн ушкăн вĕçе-вĕçе кайса, тăшман çарĕсем çине, унăн артиллери позицийĕсем çине тата Кан хулинчен кăнтăртарахрипе кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри çирĕплетнĕ пункчĕсем çине 7.000 тонна бомба пăрахнă. Çак атака тăватă сехет хушши пынă. Бамбăсем пăрахакан вырăн пирĕн çарсем умĕнче малтанах кăтартса панă вăхăтсенче майĕпен кăнтăралла куçса пынă. Истребитель-бомбардировщиксен пысăк вăйĕсем пирĕн наступлени туса пыракан çарсене пулăшса пынă. Ытти самолетсем, тăшман вăйĕсене çапăçусен районне куçса пыма чăрмантарас тесе, çапăçусен районĕнчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре кĕрешнĕ. Çак тăватă сехет хушшинче çапăçусен районне тăшманăн пĕр самолечĕ те вĕçсе пыман. Пирĕн 9 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Хĕвеланăç секторĕнче союзниксен çарĕсем Сен-Ло хули патĕнче каллех нумай малалла куçнă. Паян ирхине пирĕн çарсем, тăшман питех те хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, Сен-Ло хулинчен хĕвелтухăçнерехри çÿллĕ вырăна турта илнĕ. Халĕ сен-Ло хули таврашĕнче çапăçаççĕ».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 19-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Восель хули таврашĕнче тата Кан хулинчен кăнтăртарахрипе хĕвелтухăçнерехри тÿремсенче хаяр çапăçусем вăйланса пыраççĕ. Нимĕçсен ку районри позицийĕсене союзниксен çарĕсем татса кĕнĕ вырăна пĕтерме хăтланса, тăшман çапăçăва хăйĕн танковăй чаçĕсене кĕртсе янă. Тилли-сюр-Сель хулинчен кăнтăртарахра выртакан Жювиньи районĕнче союзниксен çарĕсем çур мильăна яхăн малалла кайнă. Нуайе хулине хăй аллинче тытса тăма хăтланса, тăшман хаяррăн çапăçать. Сен-Ло хулине июлĕн 18-мĕшĕнче каçхине тăшман çарĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Сен-Ло хулинчен Перье хулине каякан çула Тот шывĕпе Вир шывĕ хушшинчи Аминьи ялĕнчен кăнтăртарахра татнă. Аминьи ялĕ союзниксен аллинче тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене, унăн çулйĕрĕсемпе аэродромĕсене темиçе хут та хаяррăн тапăннă».

ФРАНЦУЗСЕН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ОТРЯЧĔСЕМ ГИТЛЕР ОККУПАНЧĔСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта француз патриочĕсен çапăçури çĕнĕ çитĕнĕвĕсем çинчен калакан хыпарсем илнĕ. Хирĕç тăракан организацин хĕçпăшаллă отрячĕсем, вырăнти халăх пулăшнипе, Форкалькье, Манас, Мангд тата Манжак хулисене нимĕçсенчен тасатнă.

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: французсен хĕçпăшаллă вăйĕсен отрячĕсем Францин тĕрлĕ районĕсенче чылай хуласене ирĕке кăларнă. Çав отрядсем нумай вырăнсенче нимĕçсене хирĕç малалла тапăнса пыраççĕ. Нимĕçсем, вĕсене чарма пултарайман пирки, француз патриочĕсене хирĕç хăйсен авиацине янă. Авиаци çав отрядсем йышăннă хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахать. Çапла, нумаях пулмасть, нимĕçсем Нантюа тата Леклюз хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ ВИШИ ГЕНЕРАЛНЕ ВĂРЛАСА КАЙНĂ

ЖЕНЕВА, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсем контроллесе тăракан Парижри радио çапла пĕлтернĕ: «Паллă мар çынсем» июлĕн 18-мĕшĕнче Лаваль генерала вăрласа кайнă. Çав генерал вăл — Хĕрлĕ Çара хирĕç вăрçма Виши хулинче тунă француз «легионĕн» командующийĕ. Ăна хăй килĕнчен уçăлма тухсан хăйĕн ывăлĕпе пĕрлех вăрласа кайнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем Ливорно хулипе Анкона хулине туртса илнĕ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн чылай участокĕсенче союзниксен çарĕсем каллех чылай малалла кайнă. Фронтăн Адриатика участокĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем 3—5 километр малалла кайнă, халĕ вĕсем Анкона ятлă паха порта туртса илессипе хăратса тăраççĕ. Арно шывĕ патнелле наступлени туса пырса, акăлчансен чаçĕсем чылай вырăнсенче çав шыв çине тухнă, унти вырăна çирĕплетнĕ, Ареццо хули районĕнчи Леване тата Куарате хулисене ирĕке кăларнă. Ареццо хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем çĕнĕрен малалла кайнă, вĕсем çаплах Тибр шывĕн икĕ енĕпе те наступлени туса пыраççĕ. Тăшман 5-мĕш армири американецсен чаçĕсене хирĕç хытă çапăçать, анчах та Ливорно хулинчен хĕвелтухăçнерехре американецсен чаçĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ, халĕ вĕсем 10 километр сарлакĕш фронтра Арно шывĕнчен 6 километрта кăна тăраççĕ.

Союзниксен вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.700 вĕçеве яхăн тунă.

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Италири çарсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Ареццо хули районĕнче наступлени туса пыракан акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Ареццо хулинчен 7 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Арно шывĕ урлă каçнă.

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 18-мĕшĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕ, тăшман фронтне татса, Анкона хулипе паха портне тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ. Пехота, бронетанковăй вăйсем пулăшса пынипе, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырать. Пĕр кун хушшинче союзниксен çарĕсем Анкона хули районĕнче ытти пунктсемпе пĕрле Агульяно тата Камерата хулисене туртса илнĕ. Фронтăн вăтам участокĕнче 8-мĕш армири акăлчансен чаçĕсем Ареццо хулинчен хĕвеланăçнелле тапăнса пыраççĕ, вĕсем Арно шывĕ урлă 10 километр сарлакĕш фронтпа каçса кайнă. Кунтан хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Монтеварки хулине туртса илнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, Арно шывĕ патне тухнă, Понтедера хулине туртса илнĕ, Пиза хулипе Флоренци хули хушшинчи çула татнă. Çапла вара, Арно шывĕнчен кăнтăртарахра тăракан нимĕç çарĕсене татса илнĕ. Американецсен чаçĕсем Ливорно хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманпа хаяррăн çапăçаççĕ, халĕ вĕсем хула çумĕнчи Монте делла Поджа ятлă çÿллĕ вырăнăн айккисене йышăнса тăраççĕ. Çак çÿллĕ вырăн хула центрĕнчен мĕн пурĕ те 5 километрта кăна тăрать. Союзниксен çарĕсем Ливорно хули районĕнче халăх пурăнакан ытти пунктсемпе пĕрле Понсакко, Фаулья тата Лучиана ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ.

Енер йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Кăнтăр Германири объекчĕсене тапăннă. Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем тăшманăн çапăçусем пыракан районран çурçĕртерехри çулйĕрĕсене, артиллери позицийĕсене тата автотранспортне пыра-пыра çапнă, çавăн пекех тата тăшманăн Югославири объекчĕсене тапăннă. Çав операцисенче тăшманăн 66 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Италин хĕвеланăç çыранĕнче ларакан Ливорно хулине туртса илнĕ.

БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: июлĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Берлин çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Франципе Германири тĕрлĕ объектсене тапăннă. «Москито» йышши самолетсен соединенийĕсем Берлин çине 1.800 килограмм таякан бомбăсем тăкнă.

К. Э. Алиев—Туркменин ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ

АШХАБАД, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Туркмен ССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, К. Э. Алиева Туркмен ССР-ĕн ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 8, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 06272 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. д. Тираж 14.400 экз.